ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ТЫТСА ЧАРНĂ ТРАНСПОРТ ХАТĔРĔСЕНЕ ЯТАРЛĂ ВЫРĂНА КУÇАРСА ЛАРТМАЛЛИ, ВĔСЕНЕ УПРАМАЛЛИ, КУÇАРСА ЛАРТНĂШĂН ТАТА УПРАНĂШĂН ИЛЕКЕН ХАКА ТӲЛЕМЕЛЛИ, ТРАНСПОРТ ХАТĔРĔСЕНЕ ТАВĂРСА ПАМАЛЛИ ЙĔРКЕ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Тытса чарнă транспорт хатĕрĕсене ятарлă вырăна куçарса лартмалли, вĕсене упрамалли, куçарса лартнăшăн тата упранăшăн илекен хака тӳлемелли, транспорт хатĕрĕсене тавăрса памалли йĕрке çинчен" 2012 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 36 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 95 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5 №; 2014, 12 №; 2016, 10; 2017, 11 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2 статьяра:

а) виççĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"ятарлă вырăн – транспорт хатĕрĕсене упрама ятарласа уйăрнă сыхлакан вырăн (пĕчĕк виçеллĕ карапсем валли – çĕр çинчи лаптăк е шыв объекчĕн акваторийĕн пайĕ);";

ă) çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"Çак Саккунра усă куракан ытти терминсемпе тата ăнлавсемпе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă пĕлтерĕшсемпе усă кураççĕ.";

2) 2^1 статьян 1-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕпе" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

3) 3 статьяра:

а) 2-мĕш пая "транспорт хатĕрĕн водителĕ" сăмахсем хыççăн "(карап çӳретекен)" сăмахсем хушса хурас;

ă) 3-мĕш пайра:

3-мĕш пункта "патшалăхăн регистраци палли" сăмахсем хыççăн "(патшалăх регистрацийĕ тума тивĕçлĕ пĕчĕк виçеллĕ карап валли – ыттисенчен уйăрса илмелли номер çинчен)" сăмахсем хушса хурас;

5-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) 4-мĕш пайра:

пĕрремĕш абзаца "транспорт хатĕрĕн водительне" сăмахсем хыççăн "(карап çӳретекене)" сăмахсем хушса хурас;

иккĕмĕш абзаца "транспорт хатĕрĕн водителĕ" сăмахсем хыççăн "(карап çӳретекен)" сăмахсем хушса хурас;

в) 5-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"5. Транспорт хатĕрне кĕмешкĕн конструкципе пăхнă вырăнсене транспорт хатĕрĕсене куçарса лартассишĕн яваплă çын полномочи панă должноçри çын умĕнче пичет çапса тухать, çакна транспорт хатĕрĕсене куçарса лартассишĕн яваплă çынпа транспорт хатĕрĕн водителĕ (карап çӳретекен) хăйсен хушамачĕсене тата инициалĕсене кăтартса ĕнентереççĕ, çакăн çинчен пăхни çинчен калакан актра çырса хăвараççĕ. Транспорт хатĕрĕн водителĕ (карап çӳретекен) алă пусса ĕнентерме килĕшмест пулсан е транспорт хатĕрĕн водителĕ (карап çӳретекен) вырăнта пулмасан çакăн пирки пăхни çинчен калакан актра çырса хăвараççĕ.";

4) 4 статьян 3-мĕш пайĕн 2-мĕш пунктне "патшалăхăн регистраци палли" сăмахсем хыççăн "(патшалăх регистрацийĕ тума тивĕçлĕ пĕчĕк виçеллĕ карап валли – ыттисенчен уйăрса илмелли номер)" сăмахсем хушса хурас;

5) 5 статьян 1-мĕш пайĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хулли
2024 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕ
19 №